КУЛЬТУРА

• *Шухăш*

“Нарспи” шăпи

Чăваш театрĕ нумай-нумай çынна пĕрлештернĕ, савăнтарнă, ырă туйăмсем парнеленĕ. Тен, тепĕр чух пăшăрхантаракан самант та, йывăр вăхăт та пулнă. Апла пулин те малашлăха, илемлĕхе йыхравланă.

92 çул каялла чăваш ачисен ушкăнĕ, тен, чăн Чăваш театрне пуçарса ярассине шухăша илмесĕрех, шалта çунса тăракан ĕмĕтне пурнăçлама васканă. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчех çуралнă пархатарлă ĕмĕте, унтах амаланнă малтанхи утăмсене ĕçе кĕртме, малалла аталантарса яма вăхăчĕ те /революци çĕнтерĕвĕ/, вырăнĕ те /Хусан хули/ йыхравланă, халăхĕ те /студентсем, хĕрлĕ армеецсем/ тӳсĕмсĕр кĕтнĕ. “Чăвашлатнă” пьеса хыççăн /А.Островский “Хăв пурăнас килнĕ пек ан пурăн”/ чăваш хайлавĕсем вăй илме пуçласçĕ. Театр уçăлнă хыççăн тăватă уйăхранах чăвашла çырнă пĕрремĕш драма /М.Акимов-Аруй “Вăхăтсăр вилĕм”/ кун çути курнă. Тепĕр çултан Ф.Павловăн “Сутра” камичĕ тухнă.

Чăваш театрне пуçарса яракансем вырăс /А.Островский, Л.Толстой, А.Сухово-Кобылин, Д.Фонвизин, Н.Гоголь, А.Чехов, Л.Андреев/ тата ют çĕршыв авторĕсен /Ж.Мольер, И.Шиллер, О.Уайльд, В.Гюго/ пьесисемпе ĕçлесе хăйсен ырă шухăшлă тĕллевĕсене чăваш драматургине аталантарса ярасси çине те янă, пулас çыравçăсен вĕренсе пымалли çулне кăтартса, анлăлатса пынă. Çавăнпа малтанхи репертуар вырăс тата ют çĕршыв классикĕсен пьесисемпе пуянни чăваш пьесисен пуçламăш утăмĕсемшĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

Анчах та театра чăн-чăн чăваш пьеси çитмен. Тăватă çул иртнĕ пулин те сцена çинче чăваш пурнăçне пĕтĕмлетсе сăнласа пама пултаракан произведени, Константин Иванов пек виçĕ пин йĕрке сăвă урлă “чăваш пурнăçĕн пĕтĕм энциклопедине” кăтартма пултарнă ĕç пулман-ха.

Кĕçтенттин, Федор Павловпа пĕрле Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчех хăйĕн “Нарспи” поэмине мусăк мелĕпе сцена çинче курма ĕмĕтленнĕскер, Чăваш театрĕ Хусанта тĕвĕлениччен виçĕ çул маларах çĕре кĕнĕ. Хусантан Шупашкара куçса килнĕ театршăн чи йывăр тапхăр – 1921 çулхи выçлăх. Шăпах çавăн чухне вăл Кĕçтенттин поэмине сцена çине кăларас енĕпе пĕрремĕш утăмне тăвать. Тĕлĕнмелли те пур-тăр: “Нарспи” спектакль премьери 1922 çулхи кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче, театр шăп тăватă çул маларах Хусанта А.Островскин “Хăв пурăнас килнĕ пек ан пурăн” спектакльне кăтартнă кун, иртет. Апла пирĕншĕн кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕ тăван театр пуçланса кайнипе анчах мар, К.Ивановăн “Нарспи” произведенийĕ кун çути курнипе те паллă. Апла, 88 çул каялла Чăваш театрĕн сцени çинче “Нарспи” çуралнă тесе калама пултаратпăр эпир паян.

“Нарспи” спектакль, “чăваш пурнăçĕн энциклопедийĕ”, чăн та, чылай самантпа куракана тивĕçтернĕ: Нарспипе Сетнер валак умĕнче тĕл пулни, Михетер килĕнчи чăваш туйĕ, Нарспин Тăхтаман килĕнчи пурнăçне кăтартса панă тата Нарспи Сенттипе чунне уçса калаçнă сценăсем илемлĕ те ăнăçуллă пулнă. Анчах Ивановăн поэзи кĕвĕлĕхĕ спектакльте çитеймен.

Малашне “Нарспие” сцена çине кăларнă тĕллевсем те çав поэзие шырассипе, ăна анлăлатассипе çыхăннă. “Нарспи” асамлăхне ытларах шыранă режиссерсенчен Леонид Родионова палăртмалла. Вăл “Нарспие” сцена çине пилĕк хут кăларнă /1941, 1945, 1948, 1960, 1979/, чăваш “Нарспиниана” историне çырнă. Вăрçă çулĕсенче те, вăрçă хыççăн та “Нарспи” сцена çинчен кайман.

1948 çулта тата тепĕр хут “Нарспи” патне таврăнни чăваш театр историйĕнче уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Çĕнĕ вăй, Мускав театр институтĕнчен вĕренсе тухнă артистсем, Тарханов вĕренекенĕсем, ĕçлеме пуçлаççĕ Чăваш академи драма театрĕнче. “Пысăк çĕнтерӳ”, “Чăваш театрĕн пултарулăх çĕнтерĕвĕ” статьясем пичетленеççĕ çав вăхăтра “Чăваш коммуни”, “Красная Чувашия” хаçатсенче. “Нарспи” спектакле асаннă театрăн артисчĕсем анчах мар, юрăпа ташă ансамблĕ, симфони оркестрĕ, театр училищинче вĕренекен студентсем те хутшăннă. Тумсене “Паха тĕрĕ” ĕçченĕсем хатĕрленĕ. Тĕрлĕ çул “Нарспие” Ю.Зайцевпа П.Дмитриев художниксем, Г.Лисковпа Г.Хирбю композиторсем илемлетнĕ. Вăл хăйĕн анлăшĕпе пурне те хумхантарнă, тĕлĕнтернĕ, савăнтарнă, çĕклентернĕ. Театр спектакле пĕр сиктермесĕр эрнешер кăтартнă, çав хушăра ăна тăватă пине яхăн çын пырса курнă.

Л.Родионов Нарспи рольне тин çеç вĕренсе тухнă Таисия Ерусланова шанса пани те тĕлĕнтерет, мĕншĕн тесен 1941, 1945 çулсенче лартнă вăхăтра Нарспи рольне вылянă артисткăсем те çамрăк пулнă-ха, анчах та режиссер “çĕнĕ” Нарспие суйласа илет, артисткăн илемĕпе, унăн хăйне евĕр туйăмĕсемпе хавхаланать. Нарспи “çĕнелĕвĕ” Сетнер рольне 1941 çултанпа вылянă Алексей Ургалкина хăйĕн ролĕ çине урăхларах куçпа пăхтарать.

40-мĕш çулсенчи “Нарспи” шăпи чылай драматургпа артиста шухăшлаттарнă. Çавăнпах пуль 50-мĕш çулсенче “Нарспи” поэмăн инсценировкине сцена валли хатĕрлеме харăсах Игнатий Молодов артистпа Ухсай Яккăвĕ поэт пуçăнаççĕ.

Тĕлĕнмелли те пур кунта: Игнатий Молодов хăй поэт пулмасан та поэзилĕхе туртăнать. Ăна ку ĕçре Миттапа Элкер пулăшнă. Çакна архив документĕсем çирĕплетеççĕ. 1948 çулта Нарспи ролĕпе палăрнă Таисия Ерусланова, сăмахран, Игнатий Молодовăн драмине хакласа, артистсене çав вариантпа выляма çăмăлрах пуласса шанать. Шел, Игнатий Молодов Борис Маркова Чăваш театрĕнче лартма панă “Нарспи” вариантĕ кун çути курайман. Театрăн архивĕнче те упранса юлман. Тен, Чăваш патшалăх операпа балет театрĕн архивĕнче шыраса пăхмалла.

Ухсай Яккăвĕ “Нарспие” К.Иванов поэзийĕ патне туртăнмасăр, хăй куçĕпе курса, проза енне ытларах куçса, хăшпĕр вырăнта хăй сăваласа çырать. Вăл çырнă “Нарспи” трагедире çĕнĕ сăнарсем те пур. Сăмахран, Тимеш, Тăхтаман шăллĕ, каярахпа шăпах вăл Михетерпе карчăкне, вĕсемпе пĕрлех Сетнере те



● *Чăваш халăх артисчĕсем Валентина Иванова /Нарспи/ тата Владимир Семенов /Сетнер/.*

Тăхтаман вилĕмĕшĕн тавăрать. Ухсай Яккăвĕн “Нарспийĕ” çĕнĕ персонажсем, хушса çырнă сценăсем чылаййипе 160 страница таран.

Каярах виçĕ вариантран пĕрре хатĕрлес шухăш та çуралать театрăн пултарулăх канашĕн, мĕншĕн тесен виçĕ ĕçре те лайăх енсем пулнах. Анчах 1960 çулта Чăваш театрĕ “Нарспин” виçĕ вариантĕнчен Ухсай Яккăвĕ çырнă трагедие суйласа илсе сцена çине кăларать. Ахăртнех, “Нарспи” поэмăна мелодрама шайĕнчен урăх жанра çĕклесе пăхас шухăш патне пырса тухнă спектакле лартакансем.

“Нарспин” поэзийĕпе музыка шыравне 1967 çулта 1959 çулта йĕркеленнĕ музыка театрĕ пуçăнать. Вилĕмсĕр поэмăн 1-мĕш пайĕн либретти тупăннă май Григорий Хирбю композитор та, Борис Марков режиссер та “Нарспие” опера жанрĕнче курма ĕмĕтленеççĕ. Чăвашсен музыкăпа драма театрĕн пĕрлештернĕ залĕнче “Нарспи” опера шайĕнче янăранă.

“Нарспи” пĕр хушă илтĕнменнин сăлтавĕ мĕнре-ши? Çав вăхăтра сцена çине ытти авторăн тĕрлĕ çулта çырнă ытармалла мар ĕçĕсем тухаççĕ. Вĕсен шутĕнче: Н.Терентьевăн “Куккук çаплах авăтать”, Ф.Павловăн “Ялта”, П.Осиповăн “Айтар”, Мĕтри Илпекĕн “Хура çăкăр”, И.Петровăн “Телейпе Илем”. Унти сăнарсем мĕне тăраççĕ: Сарпи, Елюк, Пинерпи, Илем...

Л.Родионов режиссер “Нарспи” патне пиллĕкмĕш хут 1978 çулта таврăнать.

Хальхинче Леонид Родионов тахçан А.Кăлканпа В.Алакер хатĕрленĕ варианта суйласа илет. Режиссер Нарспие çамрăк артисткăсемпе çĕнетсе пыма хăнăхнă йăлана малалла тăсать. Унăн Нарспийĕсем: Анфиса Долгова, Рона Ананьева, Таисия Ерусланова, Вера Кузьмина, Светлана Бубнова. Хальхинче вăл çав сăнара Валентина Трифонова артисткăра курма ĕмĕтленет. Чăваш хĕрĕсен сăнарĕсене вăл вăхăтра ăста калăплакан Нина Григорьева театрта çирĕм çула яхăн ĕçлесе те Нарспие выляйман. Таисия Ерусланова театрти пултарулăх пурнăçне Нарспи ролĕнчен пуçласа ытти роль патне çитнĕ пулсан, Нина Григорьевăшăн Нарспи ролĕ чăваш хĕрĕсен сăнарĕсен пысăк галарейин вĕçне кĕнĕ: Пинерпи, Селиме, Ахмур, Илем, вара тин Нарспи...

Анчах çамрăк артисткăн В.Трифоновăн мĕн тумалла-ха? Режиссер çак роле ăна та шанса панине, хăй те ку роле тума пултарассине ĕненсе вăл Чăваш театрĕ хăйĕн 61-мĕш сезонне вĕçленĕ кун Нарспи ролĕпе халăх умне тухать. Спектакле халăх лайăх йышăнать. Анчах Чăваш театрĕнче Нарсписем яланах пĕрре пулнă, вăхăт иртнĕçемĕн вĕсем ылмашăнса çеç пынă, çавăнпа та ку йăла, ахăртнех, ун чухне улшăнма пултарайман.

К.В.Ивановăн 100 çулхи юбилейĕ çывхарса пынă май хальхинче Чăваш академи драма театрĕн пултарулăх ертӳçи Валерий Яковлев “Нарспин” поэзи вăйне музыка “канви” витĕр сăнласа пăхма шухăш тытать. 1989 çулта вăл калăпланă концерт-спектакль театр репертуарĕнче тытăнса тăрăймарĕ. Ахăртнех, поэзипе музыка çыпăçăвĕ ăнăçлах пулса пĕтейменни, спектакльте Ивановăн поэзийĕ çителĕксĕр пулни туйăнса тăчĕ çав ĕçре. Çавăнпах пуль театр Константин Ивановăн 100 çулĕ тĕлне каллех Леонид Родионов А.Кăлканпа В.Алакер вариантĕпе лартнă спектакль патне каялла таврăнать, Валентина Иванова артисткăпа «Нарспие» çĕнетсе кăларать.

2008 çулта Иванов поэзине юратакансем “Нарспин” 100 çулне паллă туса вилĕмсĕр хайлавăн асамлă вăйĕ çинчен калаçрĕç, сцена çине çĕнĕ Нарспи тухасса кĕтрĕç.

Театр институчĕсенчен вĕренсе тухса тăван коллектива таврăннă кашни ăру хăйĕн Нарспийĕпе пуянланнă, пиçĕхнĕ. Вĕсене вĕренме янă чухне театр ертӳçисем Нарсписене, Саламписене, Пинерписене шыраççĕ.

М.Щепкин ячĕллĕ театр институтне пĕтернĕ юлашки икĕ ăру çак çирĕм çул хушшинче чăваш “Нарспинианине” малалла тăсаймарĕ. 2008, 2009, 2010 çулсем Константин Ивановпа, унăн вилĕмсĕр “Нарспийĕпе” тачă çыхăннă. 2008 çулта, каларăмăр ĕнтĕ, “Нарспи” 100 çул тултарчĕ. Пĕлтĕр Чăваш патшалăх академи драма театрне К.В.Иванов ятне панăранпа шăпах çур ĕмĕр çитрĕ, кăçал вара К.В.Ивановăн 120 çулхи юбилейне уявлăпăр...

■ **Надежда СТЕПАНОВА**

● ➡ *12 стр.*